# Хисеп вăй кӳрет

Ĕç çуккипе пĕчĕкçĕ Кураккасси ялĕн çамрăкĕсем те хуланалла тарса пĕтрĕç. Тăван тăрăхра ĕçпе вăрçă ветеранĕсемпе шкула çӳрекенсем çеç юлчĕç. Вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă Николай Михайлович Михайловпа паллаштарас килет. Вăл 88 çулта. Шкултан вĕренсе тухсан вăл пĕр çул ялтах пурăннă. 1938-1941 çулсенче Ксенофонт пиччĕшĕпе Шупашкарта Атăл хĕррипче вырнаçнă 1-мĕш аптекăра вутă татсаçурса пурăннă. Вăрçă пуçлансан тепĕр çулне Николайăн та фронта кайма ят тухнă.

– Пиччене пĕр-ик уйăх маларах ăсатрăмăр, ун хыççăн черет мана çитрĕ. Çапăçу хирне районтан 25-ĕн тухса кайрăмăр. Тăван пиччепе тантăшăмсем вăхăтсăрах çут тĕнчерен уйрăлса кайнишĕн халĕ те чун кӳтсе килет, – тет Н.Михайлов.

Чăваш каччин вăрçă çулĕсем Мускав çывăхĕнчи Ногинск хулинче пуçланнă. Сывлăш çар десанчĕн полкĕнче вĕсене парашютпа сикме хăнăхтарнă, кайран Моздок çывăхне куçарнă. Пĕр çапăçура амансан сержант-пулеметчик Баку хулинчи госпитальте уйăх сывалнă. Курск пĕккинчи хĕрӳ çапăçусем те унăн асĕнче ĕмĕрлĕхех юлнă. 1-2-3-мĕш Украина фрончĕсене кĕнĕ 25-мĕш гварди танк бригади тăшмана Смоленск, Воронеж, Калининград, Харьков хулисенчен хăваласа тухса Днепр урлă каçнă та Польша, Румыни, Чехословаки çĕрĕсем урлă Германиех çитнĕ. Çав подразделенин сапер взвочĕн отделени командирĕ Николай Михайлов сержант та асăннă çапăçусенче хастар пулнă. Ахальтен мар ăна Хĕрлĕ Çăлтăрпа Мухтав (3-мĕш степень) тата Тăван çĕршывăн аслă вăрçин (2-мĕш степень) орденĕсемпе, «Хастарлăхшăн», «Германие çĕнтернĕшĕн» тата «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе чысланă.

Вăрçă хыççăн тата икĕ çул Беларуçри çар чаçĕнче службăра пулнă Николай. Çуркунне яла çаврăнса çитнĕ те тепĕр икĕ уйăхран ялти чипер хĕрпе Аннăпа мăшăрланнă. Арăмĕ колхоз ферминче ĕнесене пăхнă, хăй вара аслă конюх пулса 60 çулчченех тăрăшнă: картара виçĕ айăрпа 47 кĕсре тихисемпе пĕрле тăнă. Çавăн чухлĕ лаша ĕрчетсе янăшăн ăна колхоз правленийĕ – тырăпа укçа, ял хуçалăх управленийĕ çитсă тата 100 тенкĕ укçа парса хавхалантарнă.

Лаша пăхнисĕр пуçне Николай Михайлович ял çыннисене çурт-йĕр çаврăрма нумай пулăшнă. Уйрăмах хапха лайăх ăсталанă. Кӳршĕ ялсенче те вăл тунă пӳрт сахал мар пулнă. Ăста та пултаруллă платнике таврари ялсенче халĕ те манмаççĕ. Шел пулин те, 1955 тата 1971 çулсенче ветеранăн кил хуçалăхĕ тĕппипех çунса кĕлленнĕ. Чун-чĕрери хуйхăпа йывăрлăха чăтса 1974 çулта вĕсем кирпĕч çурт-йĕр çаврăнă. Фронтовикăн 5 ачинчен икĕ ывăлĕ çĕре кĕнĕ ĕнтĕ, тепĕр икĕ хĕрĕ Чулхула облаçĕнчи Пильна районĕнче пурăнать.

Вăрçăпа ĕç ветеранĕн кун-çулĕ вăрăм та пархатарлă, анчах тумхахлă. Çапах та вăтă салтак парăнмасть-ха: шур сухаллă, кăвак çӳçлĕ, чипер пит-куçлă, пысăках мар кĕлеткеллĕ çынна 88 çула çитнĕ тесе калаймăн. Чăнласах та хисеп вăй кӳрет пулмалла. Вăл яланах хыпкаланать: икĕ çул каялла Чулхула облаçĕнчи Княжиха ялĕнче кирпĕч пӳрт туянчĕ. Халĕ унта кĕçĕн хĕрĕпе пĕрле пурăнать. Пурнăçа юратакан мучи чĕлĕм туртмасть, эрехпе те айкашмасть, тăван тавралăхшăн вара куллен тунсăхлать. Пĕлен-паллакансем ăна çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çулпа чăтăмлăх сунаççĕ.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**

**Элĕк районĕ.**